# «Янра ялан, сăпка юрри!»




***Сăпка юррисене халăхра сарас тĕллевпе кăçал республика шайĕнчех ятарлă акци ирттернĕ. Унта фольклористсем, музыка енĕпе ĕçлекен специалистсем, тĕрлĕ çулти ачасем хутшăннă.***

Акцие 70-е яхăн номер тăратнă. Çак кунсенче вĕсене Наци библиотекинче пăхса тухса пĕтĕмлетнĕ. Çак акциех пирĕн халăхăн фольклорĕ питĕ пуяннине тепĕр хут çирĕплетнĕ. Жюри халăх юррисене пуçтаракан Гаврил Федоров тĕрлĕ вырăнта çырса илнĕ сăпка юррисене те, Чăваш Енри тата ун тулашĕнчи чăвашсен упранса юлнă кĕввеçемме те тăнланă. Сăмахран, Шупашкар районĕнчи «Телей» халăх фольклор ушкăнĕн солистки Ольга Светопольская Елчĕк районĕнчи Ĕнелте пурăнакан Мария Филимоновăран çырса илнĕ «Улькуç кайнă вăрмана» сăпка юррине шăрантарнă. Шупашкарти «Пилеш», Наци библиотеки çумĕнчи «Эткер», Тутарстанри Пăва районĕнчи Халăхсен туслăхĕн çуртĕнчи «Туслăх» фольклор коллективĕсем тата ытти ансамбль хăйсен пуян репертуарĕпе паллаштарнă.

**Надежда СМИРНОВА**